◆ АСЛӐ ÇӖНТЕРӲ: 65 ÇУЛ

# Чӑваш Енӗн пӗрремӗш онкологӗ



Иртнӗ ӗмӗрӗн аллӑмӗш çулӗсенче унӑн хушамачӗпе ятне пӗтӗм республика пӗлсе тӑнӑ. Турӑ пил панӑ врач, асамçӑ хирург тенӗ ӑна. Ку – Петр Ермолаевич Ермолаев онколог пулнӑ...

Эх, вӑхӑчӗ хӑвӑрт иртет-çке!

1958 çулта эпӗ Хусанти медицина институтне пӗтернӗ хыççӑн Тӑвай район пульницинче ӗçлеме пуçларӑм. Ӗç килӗшрӗ, куллен-кун çӗнӗ çынсемпе паллашатӑп, ӗмӗтсем çунатлӑ. Уйӑх та иртмерӗ пуль, мана васкаварлӑн Шупашкара, сывлӑх сыхлавӗн министерствине, хирурги енӗпе тӑватӑ уйӑхлӑх курссене вӗренме чӗнсе илчӗç. Çавӑн чухне вара пӗр уйӑх чухлех мана республикӑри онкологи диспансерӗнче пулмашкӑн тӳр килчӗ.

Диспансерӑн тӗп врачӗпе П.Е.Ермолаевпа пуçласа паллашни те маншӑн пысӑк телей пулнӑнах туйӑнчӗ. Ара, çак тӗлӗнмелле чаплӑ хирург çинчен мӗн ачаран мӗн-мӗн илтмен-ши, хаçат-журналта мӗн-мӗн вуламан-ши? «Чӑваш коммуни», унтан «Коммунизм ялавӗ», «Красная Чувашия», унтан «Советская Чувашия» хаçатсенче, «Ялав» журналта унӑн пурнӑçӗпе ӗçӗ-хӗлӗ çинчен уйӑхсерен тенӗ пекех вӑл тунӑ кӑткӑс операцисем пирки очерксемпе тӗрленчӗксем, кӑсӑклӑ хыпарсем пичетленсех тӑратчӗç. Вӑл темиçе çын чӗрине операци тунине те пӗлнӗ.

Çак курссенче вӗреннӗ чухне Петр Ермолаевич тӑвакан операцисене курмасерен тӗлӗнмеллипех тӗлӗннӗ ӗнтӗ. Куçпа мӗн курнине сӑмахпа каласа та параймӑн çав, ку – тӗлӗнтермӗш! Скальпельпе пӗрре сӗрнипех хырӑма уçать... Пӗр органа та сиенлемест тата. Мӗн тери çаврӑнӑçулӑх! Кашни хусканӑвӗ вырӑнлӑ-çке, вӑр-вар, килӗшӳллӗ. Мӗн тери пысӑк хӑнӑху, ӑсталӑх. Унтанпа эпӗ хам та ӗнтӗ аллӑ çул хирургра ӗçлерӗм, хамӑр çӗршыври тата хӑш-пӗр ют çӗршывсенчи паллӑ хирургсем операцисем тунине те сахал мар сӑнанӑ, анчах та кун пеккине пӗртте курман. Хӗрӗх-хӗрӗх пилӗк минут хушшинче ракпа сиенленнӗ хырӑмлӑха лимфа тӗввисемпе пӗрле касса кӑларнинчен те пӗрре çеç мар пӑхса тӗлӗнсе тӑнӑ. Эпӗ çеç мар, республикӑри нумай-нумай хирург унӑн операци тунӑ самантсенчи пултарулӑхӗпе ӑсталӑхне курса мӑнаçланмаллипех мӑнаçланнӑ.

Çапла, ку – чăнлăх. Иртнĕ ĕмĕрти 60-мĕш çулсен варринче республикăри тĕп акушер-гинеколог Иван Николаевич Николаев каланă сăмахсем те асран тухмаççĕ. «Петр Ермолаевич хăйĕн хирургинчи ăсталăхĕпе, – тенĕччĕ вăл, – Европа шайĕнчи хирургсенчен те çўллĕрех çĕкленчĕ. Ку – чăн-чăн ăсталăх». Паллах, Петр Ермолаевич онкологири тата пĕтĕмĕшле хирургири çак çитĕнӳ патне хăйĕн кулленхи хастар та таса чунлă ĕçĕпе, пурнăçри тумхахлă çулпа утса çеç çитме пултарнă.

Çураласса вăл Шупашкар районĕнчи Юртукассинче 1908 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче çуралнă.

«Çитмен пурнăç тути-масине ача чухне туйса илтĕм, – çырнă вăл хăйĕн автобиографийĕнче. – Пухса кĕртнĕ тыр-пул раштавччене пĕтетчĕ. Асатте, Федоров Данил Федорович, вара çу каçа Атăл çинче бурлакра çӳренĕ. Вăл питĕ вăйлă пулнă, çирĕм пăт çĕклессине ним вырăнне те хуман. Асанне, Наталия Федоровна, пĕтĕм хуçалăха тытса пынă. Вăл вун икĕ ывăлпа пĕр хĕр çуратнă, анчах пĕртенпĕр манăн атте çеç, Данилов Ермолай Данилович, чĕрĕ юлнă. Асатте вăхăтсăр вилнĕ, асанне суккăрланса ларнă, атте вара çамрăк чухне татăк çăкăршăн ял-ял тăрăх ыйткаласа та çӳренĕ.

1906 çулта атте Сидельниковăра лотерея билечĕ туяннă та унпа рояль выляса илнĕ. Мĕн тери пысăк пуянлăх! Рояле сутса янă та укçипе лаша туяннă, асатте çуртне юсаса çĕнетнĕ, Анатри Макаçри пуян çын хĕрне Филиппова Анна Филипповнăна качча илме (ылтăнпа 100 тенкĕ) хулăм укçи тӳленĕ. Октябрьти революциччен вăл Хусан помещикĕн Тихомировăн скипидар заводĕнче ĕçленĕ, уйăхсерен 7 тенкĕ шалу илнĕ. Киле çулталăкра та икĕ-виçĕ хутчен çеç темиçе эрнелĕхе килсе кайнă. Хăйĕн ĕçне тĕпĕ-йĕрĕпе пĕлнĕ, питĕ юратнă. Революци хыççăн вăл малтан Троярти, унтан Пушкарти скипидар завочĕсенче директорта вăй хунă. 1927 çулта манăн атте хатĕрлекен продукцие Берлинта irttерекен тĕнчери выставкăна ăсатнă. Аттен тасатнă скипидарĕ французсеннинчен те пахарах тата тăватă градус хăватлăрах пулнă! Атте тĕнчери пĕрремĕш премие тивĕçнĕ тата пысăк укçа илнĕ.

Çапла, кĕтмен çĕртен атте пуян çын пулса тăнă. Вăл çĕнĕ çурт-йĕр çавăрнă, ăратлă Орлов урхамахĕсене ĕрчетме пуçланă. Пирĕн тăрăхра пурăнакансем ăна хытă ăмсаннă, буржуй тесех чĕннĕ. 1928 çулта унăн çуртне туртса илме, хăйне темиçе хутчен те тĕрмене лартма тытăнса пăхнă. Анчах та пĕтĕм тĕнче умĕнче чăваша чапа кăларни ăна хăтарнă. Вăл мана та питĕ юратнă, «Юлашки лашана сутатăп та ывăлăма аслă пĕлӳ паратăпах», – тенĕ. Атте аллă тăваттăра 1936 çулта йĕпе пыр ракĕпе чирлесе вилнĕ.

Анне, Анна Филипповна, хутла вĕренмен пулнă: çырма та, вулама та пĕлмен, анчах хуçалăхри ĕçсене питĕ пĕлсе туса пынă. Хăех суха пуç тытнă, тырă акнă. Çемьере мансăр пуçне икĕ йăмăкпа шăллăм ӳснĕ. Анне утмăл саккăрта 1950 çулта хырăмлăх ракĕпе чирлесе вилчĕ. Эпĕ ăна хамах операци тунăччĕ, шел, ăшри нумай орган сиенленнĕ пирки çулталăк та пурăнаймарĕ.

Çамрăклăх çулĕсенче нуша мĕнне ытлашши пĕлмен те эпĕ, манăн пурте ытлăçитлĕ пулнă. Пуçтах ӳснĕ, вăй выляса тăнă, никамран та хăраман, хампа пĕр çулти ачасене кӳрентернĕ те. Анне те ятланă, патак та лекнĕ. Шкулта япăх вĕреннĕ, уроксене сиктернĕ, виçĕ хутчен иккĕмĕш çула юлнă. Çуллахи каникулсем вăхăтĕнче атте ятарласа мана вĕрентме учитель тытнă...»

1928 çулта Петр Ермолаевич Шупашкарти икĕ сыпăклă шкула пĕтерсе аттестат илет те Мускаври 1-мĕш медицина институчĕн сиплев факультетне вĕренме кĕрет. Студент пурнăçĕ ăна килĕшет, тăрăшса вĕренет, спортпа туслашать. Вăл уйрăмах вырăссен аслă писателĕн Александр Иванович Герценăн мăнукĕн Петр Александрович Герцен профессорăн лекцийĕсене юратса итленĕ. Герцен ун чухне пĕтĕм тĕнчипе чи чаплă хирургсенчен пĕри шутланнă. Май килнĕ чухне чăваш студенчĕ профессор тăвакан операцисене те курма тăрăшнă. Вăл та, ытти студентсем пекех, П.А.Герцен пек ăста хирург пулма ĕмĕтленнĕ, унăн ĕçри çаврăнăçулăхне тĕплĕн сăнаса вĕренсе пынă. Институтăн юлашки курсĕнче вĕреннĕ чухне Петр Ермолаевича хăй тĕллĕн ĕçлеме тытăнас шухăш та канăç памасть. Вăл пĕр-пĕр кăткăсрах операци тума майсем шырать. Анчах профессор çамрăк студента скальпель тыттарма васкамасть-ха.

Диплом илес умĕн пулас врачсене Орехово-Зуево районĕнчи Сопово участокне торф кăларма ăсатаççĕ. Кĕтмен çĕртен пушар тухать. Йĕри-тавра çĕршер гектар çинче торф çунать. Тĕтĕм. Нумай рабочи вут-çулăм айĕнче юлать. Виçĕ талăкран кăна студентсен пысăках мар ушкăнĕ пушар тыткăнĕнчен хăтăлать.

1932 çулта Петр Ермолаевич институтран ăнăçлă вĕренсе тухать. Ăна Горький хулинчи сывлăх сыхлавĕн пайне направлени параççĕ. Çамрăк хирург Молотов ячĕллĕ автозавод поликлиникинче ĕçлеме тытăнать. Аслă стройка, çĕнĕ больница, кунта хирурги уйрăмне те йĕркелеме ĕлкĕреймен-ха. Эрне, уйăх иртет, ăна çаплах алла скальпель тыттармаççĕ. Вăл ĕçсĕр аптранипе тăван Шупашкара килет.

Сывлăх сыхлавĕн халăх комиссарĕн заместителĕ И.Н.Николаев Петр Ермолаевича иккĕмĕш хирург пулса ĕçлемешкĕн Улатăр пульницине ярать.

Пульницан тĕп врачĕ тата хирурги уйрăмĕн заведующийĕ М.В.Покровский ун чухне пирĕн республикăра чи вăйлă хирургсенчен пĕри пулнă. Вăл хырăмлăха операци тăвас енĕпе пысăк ăстаçă шутланнă. Ватă тухтăр çамрăк хирурга кăмăллăн йышăнать, ăна хăйĕн мĕнпур операцине хутшăнма ирĕк парать. Петр Ермолаевича хирург ĕçĕ ытларах та ытларах хавхалантарса пырать ĕнтĕ. Часах ăна Михаил Владимирович хăй тĕллĕн операцисем тума ирĕк парать. Опытлă хирург ертсе пынипе вăл вĕсене ăнăçлă ирттерет. Икĕ уйăхранах ăна пĕр çулталăка Хĕрлĕ Çара илеççĕ.

Мускавра çамрăк хĕрлĕ армеецсен курсĕнче пулнă хыççăн Петр Ермолаевич Серпухов, Кимры, Буй хулисенче хĕсметре пулать.

«Киле таврăнма вăхăт çитрĕ пулин те мана ăсатма васкамарĕç, – çырнă вăл хăйĕн автобиографийĕнче. – Эпĕ вара Орел хулинчи пĕр полкра кĕçĕн врач пулса тăтăм. Вунă уйăхран пирĕн подразделенире пысăк инкек пулса иртрĕ. Повар пиçнĕ яшкана пĕр витре çырма шывĕ хушнă та салтаксем наркăмăшланса вар виттипе чирленĕ. Никам та вилмен, çапах та аллă ултă хĕрлĕ армеец пĕр эрнелĕхе стройран тухнă. Пиçнĕ апата тĕрĕслесе пăхман тесе пĕтĕм айăпа ман çине тиерĕç. Воронежри çар трибуналĕ çулталăк çурăлăха тĕрмене хупмалла турĕ. Орловри тĕрмере спекулянтсемпе, суя укçа çапакансемпе пĕрлехи камерăра лартăмăр. Икĕ-виçĕ эрнерен эшалон çине лартса Беломор каналне тунă çĕре ăсатрĕç. Тавар вакунĕнче ултавçăсемпе, çын вĕлерекенсемпе тата вăрăсемпе пĕрле кайрăмăр. Çак çул Орел хулинчен Сорока (Беломорск) станцине çитиччен уйăх ытла тăсăлчĕ. Пире кунне икĕ хутчен çитеретчĕç (икĕ-виçă килькаллă бульон банки тата 300 грамм хура çăкăр).

Япăх апата пула эпĕ утайми пултăм. Сорока (Беломорск) станцинче вакунсенчен ансан пире хĕç-пăшаллă конвоирсем çавăрса илчĕç. Йытăсемпе. Станцирен виçĕ çухрăма виçĕ сехетре аран-аран утса тухрăмăр.

Лагерьте пире вĕрсе каламалли инструментсен оркестрĕ кĕтсе илчĕ. Пытару маршĕпе. Кăмăл хăрушла пăсăлчĕ. Кăкăрта çулăм çунчĕ. Канăça çухатрăм.

Çапла эпĕ хаяр бандитсемпе ултавçăсен, пуç касакансен эшкерне пырса лекрĕм. Пĕри те ĕçе тухасшăн марччĕ. Вĕсене амбулаторире йышăнма та пĕртте çăмăл пулмарĕ. Кинжал е çĕçĕ кăтартаççĕ, врачран кулленхи ĕçрен хăтармашкăн ирĕк ыйтаççĕ. Пĕр-пĕр чир кăтартăвĕсĕрех вуншар хут çапла ыйтусене тивĕçтерме те тивнĕ.

Виçĕ уйăхран мана Парандово çулне тăвакансем патне ячĕç. Кунта ытларахăшĕ политика енчен шанăçран тухнă çынсемччĕ. Вăрманта йывăç хатĕрлетчĕç, бараксенче пурăнатчĕç. Канмаллипех кантăм вара, тинех канлĕ çывăртăм. Пилĕк уйăх çапла пурăнтăм. Унтан Кольски çур утравĕ çинчи Тулома гидроэлектростанцине çĕклекенсен лагерьне илсе пычĕç. Ку – Кола чукун çул станцийĕнчен 15-16 çухрăмра ларать. Лагерьте хама ирĕклĕ тытаттăм, сиплев пункчĕн пуçлăхĕ ирĕк панипе пулла та çӳреттĕм.

Тĕрмене лартнăранпа вун пĕр уйăх çитсен мана айăпсăр айăпланă тесе ирĕке кăларчĕç. Орелти çар чаçĕнчи повар пиçнĕ яшкана пĕр витре çырма шывĕ хушнине хăех йышăннă терĕç».

Петр Ермолаевич Орела таврăнать. Поликлиникăна ĕçе вырнаçать, чирлĕ çынсене йышăнать, çав хушăрах васкавлă пулăшу станцине дежурствăна та çӳрет. Ĕçрен пушă вăхăтра Семашко ячĕллĕ пульницара операцисем тунине сăнать. Хирурги уйрăмĕн заведующийĕ те хирург пуласшăн çунакан врача асăрхать. Темиçе уйăхран ăна хăй тĕллĕнех операцисем тума та шанать.

«Çурла уйăхĕн хитре кунĕсенчен пĕринче Орел хулинчи сывлăх сыхлавĕн пай пуçлăхĕ Петерсон, арăмĕн менелникĕ çитнĕ ятпа, хăй патне хăнасем пухма шут тытнă, – çырать Илья Тукташ «Вилĕме çĕнтерни» очеркĕнче (Ялав, 1950, 4№). – Çак ĕçке кĕтмен çĕртен, ăнсăртран, хăй юлташĕ ӳкĕтленипе, вăхăтлăха хула поликлиникине ĕçлеме вырнаçнă çамрăк врач Петр Ермолаевич та лекнĕ.

Калаçу малтан ӳрĕк-сӳрĕккĕн кăна пынă, хăнасем пĕр-пĕринпе кам ăçта ĕçлени, кам мĕнле çĕнĕ кино е спектакль курни тата çавнашкал урăх вак-тĕвексем çинчен çеç сăмахлакаласа ларнă.

Петерсон тахçан ĕлĕк, патша самани вăхăтĕнчех, Германире вĕреннĕ пулнă. Çавăнпа вăл питĕ мухтанма юратнă, хăйне ыттисен умĕнче яланах пысăка хурса мăн кăмăллă тытнă.

– Пĕлетĕр-и мĕн, тăвансем? Пирĕн çĕршыври медицина кая юлса пырать-ха, унăн приоритечĕ çинчен ĕмĕтленмелли те çук, – тенĕ вăл хĕрĕнкĕрех сассипе.

Паллах, ку сăмахсем врачсене калама çук вĕчĕрхентернĕ, анчах вĕсенчен нихăшĕ те кил хуçине уççăн хирĕçлесе унăн кăмăлне хуçасшăн пулман. Çакна кура Петерсон тата ытларах хăмпăланма пуçланă. Вăл çамрăк врачсене куç кĕрет «пиççе çитмен-ха эсир» тесе тăрăхланă.

Петр Ермолаевич чăтса ларма пултарайман çак мăшкăла. Вăл вырăнтан сиксе тăнă та Петерсон умне хăюллăн пынă.

– Каçар мана, Моисей Самсонович, сирĕн сăмахăра пӳлнĕшĕн. Кашни япала виçипе чикки пур. Эсир çав чикĕрен тухса каятăр, – тенĕ.

– Эсир çав виçене кĕрес те çук, – хирĕçленĕ лешĕ сухалне каçăртса.

– Карлик инçене сурма пултарнипех хăйне пысăк çын тесе шутлать. Эсир хăвăр сăмахсемпе çав карликран та пысăкрах пек тыткалатăр.

Ку сăмахсем хыççăн çамрăк врачсем пурте ахăлтатса кулса янă. Вĕсен хушшинче: «Тĕрĕс, Ермолаев! Маттур! Маттур!» – тесе кăшкăрнисем илтĕннĕ. Вĕсем пурте Петр Ермолаевич майлă пулнă.

Çамрăк çын чăрсăрлăхĕ Петерсона шалт уртарса янă.

– Охо, чăх чĕппи те ăмăрт кайăка сăхать иккен, – тенĕ вăл хулăн тутине чĕтрентерсе.

– Ăçта вĕренсе тухнă вара эсĕ, сухалсăр тусăм?

– Совет шкулĕнчен, – хуравланă Петр Ермолаевич татăклăн.

– Нумая вĕрентрĕç-и сана унта?

– Этеме пурнăç вĕрентет, – хирĕçлеме пикеннĕ Петр Ермолаевич. Анчах калаçăва Петерсонăн çамрăк арăмĕ вĕçне çитерме паман.

– Çитĕ сире тавлашма, – тилмĕрме пуçланă вăл упăшкине.

Çак пĕчĕк хирĕçÿ хыççăн хăнасем часах лăпланнă, анчах Петерсон чĕринчи вĕчĕ пачах та тамалман. Вăл халь çамрăка çакăнтах мĕнле те пулин такăнтарса намăслантарасшăн пулнă. Кăна тума сăлтавĕ те часах тупăннă.

Ятлă кукăльпе пыллă чей ĕçнĕ хыççăн хăнасен, Петерсон арăмĕ ыйтнипе, пĕрин хыççăн тепри сăвăсем вуламалла пулнă. Черет йĕркипе Петр Ермолаевича та мĕн те пулин калама тивнĕ. Кунта ĕнтĕ Петерсонпа унăн çывăх тусĕсем, вăл такăнасса кĕтсе, малтанах савăнса ларнă.

– Ну, ну, çамрăк Наполеон, хăюллăрах пул!

Петр Ермолаевич васкамасăр ура çине тăнă.

– Эпĕ сире Владимир Маяковский сăввине вуласа паратăп.

Я с теми,
кто вышел
строить
и месть
в сплошной
лихорадке
буден.
Отечество
славлю,
которое есть,
но трижды –
которое будет.

– Фу, какая гадость, – сăрланă тутине пăркаласа илнĕ хуçа майри.

– Çитет! Çитет! Урăххине вула! – çуйхашма тытăннă Петерсон тусĕсем.

– Чăтма пултараймастăп Маяковские, – питне пĕркелесе илнĕ Петерсон.

– Тĕрĕс мар, суятăр! – чĕрре кĕнĕ Ермолаев. – Пирĕн çамрăксем классикăлла искусствăна та ăнланаççĕ. Акă, итлĕр!

Вăл Адам Мицкевич сăввине пĕр чарăнмасăр каласа панă. Вара сĕтел хушшинче ларакан врачсем, Петр Ермолаевич майлисем алă çупма пуçланă...

Хăнасем килсене саланнă, менелникре мĕн пулса иртнине вĕсем часах манса кайнă. Анчах Петерсон чĕрери вĕчче манма пултарайман. Врачсене хулари пульницасене ĕçлеме вырнаçтарасси пĕтĕмпех унтан килнĕ. Вăл çакăнпа усă



П.Е.Ермолаев ĕçтешĕсемпе пĕрле. 1957, çу, 15

курса П.Е.Ермолаева, унăн хирург специальноçĕ пуррине шута илмесĕрех, амбулаторнăй приема ĕçлеме янă. Çамрăк хирургăн хăйĕн профессийĕпе ĕçлесси килнĕ. Çапла туни, паллах, унăн ĕмĕтне пĕтĕмпех касса татнă.

Петерсонăн çилли çаплах иртсе кайман. Харсăр йĕкĕт хăйĕн тĕллевĕсем патне хăюллăн çывхарса пынине кура вăл часах Петр Ермолаевича операцисене çӳреме чарнă. Вара канăçсăр йĕкĕт ун пек операцисене çĕрле, вăрттăн çӳренĕ. Пульница хуралçи, Петр Ермолаевича кăмăллаканскер, ăна операци хăçан пулассине пĕлтерсе тăнă. Операци тăвакан хирургсем Петр Ермолаевича яланах хапăл пулнă.

Çапла тертленсе пурăнма тивнĕ çамрăк врача хăйĕн профессийĕ патне çывхарса çитиччен. Вăл малтанхи кунсенче Петерсон хăйне мĕншĕн çав териех курайманнине ниепле те ăнланса илме пултарайман. Сăлтавĕ пĕр çул кайран, П.Е.Ермолаев Орелтан Саратова куçса кайнă хыççăн тин тăрă шыв çине тухнă. 1937 çулта тивĕçлĕ органсем Петерсонсене, арăмĕпе иккĕшне те – халăх тăшманĕсене – хăйсен аллине илнĕ...»

1936-1937 çулсенче П.Е.Ермолаев пĕр çулталăк хушши Саратоври медицина институчĕн Энгельс хулинче вырнаçнă онкологи кафедринче ординатурăра вĕренет. Икĕ çуллăх программăна вăл пĕр çултах пурнăçлать. А.П.Зибенгер профессор ертсе пынипе операци хыççăн операци тăвать, кунсерен 70 е ытларах сывă мар çынна йышăнать, хăйĕн пĕлĕвне ӳстерсех пырать. Апат вăхăтĕнче сывлăш çавăрса илет, пульницарах çывăрса тăрать. Тăрăшса ĕçлени сая каймасть. Петр Ермолаевич ĕнтĕ хирург профессине нумай енлĕн алла илет. Шел, çак вăхăтра чирлĕ амăшĕ чĕннипе вăл васкаварлăн Чăваш Ене таврăнать.

Шупашкарта П.Е.Ермолаева республика пульницин тĕп врачĕн сиплев енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулма çирĕплетеççĕ, çавăнпа пĕрлех хирурги уйрăмне ординатора вырнаçать. Çак ĕçсенче вăл Тăван çĕршывăн аслă вăрçи пуçланичченнех вăй хурать.

1941 çулхи утă уйăхĕн 4-мĕшĕнче Петр Ермолаевич Хĕрлĕ Çара тухса каять.

Ăна Çурçĕр-хĕвел анăç фронтĕнчи куçса çӳрекен госпитальсене пулăшакан уйрăм ротăри хирургсен ушкăнĕн пуçлăхĕ туса хураççĕ.

«Пирĕн ушкăнра икĕ хирург, виçĕ медсестра тата икĕ санитар пулнă, – пурнăçри паллă самантсемпе малалла паллаштарать Петр Ермолаевич. – Çак харсăр ушкăн пирĕн армире те чи çаврăнăçулли те шанчăкли шутланнă, армин санитари службин пуçлăхне кăна пăхăнса тăнă. Пире чи вăйлă çапăçусем пынă çĕре яратчĕç. Медсанбат талăкра 800 е ытларах аманнă çынна йышăнатчĕ. Хăшĕсем операци тума черет кĕтсех вилсе каятчĕç. Мĕн тăвăн? Виçшер талăк пĕр улшăнмасăр операци пӳлĕмĕнчен тухманни те пулнă. Тепĕр чухне уйăхĕ-уйăхĕпе канăça пĕлмен. Нумай хирург çак йывăрлăха чăтаймастчĕ. Пирĕн ушкăн та вăрçă çулĕсенче ултă хирурга улăштарчĕ...

Эпĕ пушă вăхăт кăшт тупăнсанах икĕ пăтлă кире пуканĕсене çĕклеттĕм. Вĕсене яланах хампа пĕрле турттарса çӳренĕ. Тĕрлĕ хускану тăваттăм, сивĕ шывпа е юрпа çăвăнаттăм. Çавна пула ывăнни те хăвăртах иртетчĕ.

Хирург ĕçĕшĕн икĕ орден илтĕм, тепĕр иккĕшне вăрăм чĕлхене пула çухатрăм.

Чĕлхе – манăн тăшман. Çавăн пекех çĕре яхăн тав сăмахне тивĕçлĕ пултăм, çав шутра Верховнăй Главнокомандующи Совет Союзĕн Маршалĕ Сталин юлташ 20 хутчен тав тунă...»

Çапла салтак шинелĕпе алăра скальпель тытса Петр Ермолаевич Бессараби, Румыни, Венгри тата Австри çĕрĕсем тăрăх утса тухнă. Ăста та тавçăрулла хирург пин-пин боецăн пурнăçне çăлса хăварнă. Шухăшласан, пĕр операци тума та мĕн тери хăюлăх кирлĕ! Юнашарах çĕр хура-хĕрлĕ çулăмпа явăнса çунать, чуна хăратса хăрушла тискеррĕн чĕтренсе-кисренсе тăрать.

Пĕррехинче медсанбата питĕ йывăр аманнă боеца илсе пынă. Унăн мăйĕнчи суранĕ хытă шыçса кайнипе пырне пĕтĕмпех питĕрсе лартнă-мĕн. Вăл пачах сывлайман, чĕри те тапма чарăннăпа пĕрех – кĕç-вĕç пурнăçĕ сӳнет. Кунта шухăшласа тăма вăхăт çук. Петр Ермолаевич аллисене çумасăрах скальпель илет те самантрах боец пырне чиксе шăтарать, сывлăшне кăларать...

Ансат операци пĕтĕмпе те çур минута яхăн çеç пынă. Тепĕр çур минут тăхтаса тăнă пулсанах суранлă çын вилсе каятчĕ! Суран мĕнпе çыхăннине хирург çийĕнчех тавçăрса илнĕ пирки боецăн пурнăçне çăлса хăварнă. Тумтирне хывсан пăхаççĕ те – ун çинче тата 25 суран кураççĕ. Ку – Совет Союзĕн Геройĕ Петр Шлюйков аслă лейтенант пулнă. Çакăн çинчен хĕрлĕ армеецсен куллен тухакан «Мужество» хаçатĕнче 1943 çулхи пуш уйăхĕн 28-мĕшĕнче çырса хыпарланă.

Каярахпа П.Е.Ермолаев патне марганцовкăпа çырнă çыру килет. Хирти госпитальте выртакан Петр Шлюйков чернил тупайман-мĕн! Вăл Петр Ермолаевича хăйне вилĕмрен çăлса хăварнăшăн чĕререн тав тунă, нимĕç фашисчĕсене хăйĕн кашни суранĕшĕн тавăрма сăмах панă.

Кунашкал тĕслĕхсем сахал мар пулнă. Вăрçă вăхăтĕнче хирург ĕçĕ йывăр пулсан та П.Е.Ермолаев хирурги операцийĕсем тăвассине малалла аталантарма çĕнĕ меслетсем те шухăшласа кăларнă. Сăмахран, вăл шокран сыватмалли лайăхрах меслет, пуç шăммине касса тасатмалли операцисен çĕнĕ мелне, алăура çине шина хумалли. ăнаçлă хатĕр шыраса тупнă. Çак çĕнĕлĕхсене Совет Çарĕн тĕп хирургĕ Н.Н.Бурденко генерал-полковник тата С.И.Спасокукоцкий академик пысăка хурса хакланă.

Петр Ермолаевич Çĕнтерÿ кунне Австрири Гозистерторф хулинче кĕтсе илнĕ. Врачăн чун-чĕри савăнăçпа тулнă, хăйне телейлĕ туйнă. Вăрçă çулĕсенче вăл 60 пин операци тунă! Тепĕр хут вулăр та шухăшласа пăхăр, хаклă вулаканăм: 60 пин!

Чăваш врачĕн вăрçăри ĕçне-хĕлне унăн командирĕ çапларах хак панă: «Во время войны майором медицинской службы Ермолаевым П.Е. с успехом сделаны сложных операций в МСБ и ППХГ первой линии при:

проникающих ранениях черепа – 473,

ранениях груди (проникающих) – 1036,

проникающих ранениях живота – 1058,

комбинированных ранениях

(грудь, живот, конечности и череп) – 279,

ранениях крупных сосудов – 687.

Выполнена ампутация конечностей – 832,

произведена первичная обработка ран различной сложности – 35674 и мн.др.

За время войны им было сделано 10 рационализаторских предложений по вопросам хирургического и лечебно-эвакуационного обслуживания раненых. Майор м/с Ермолаев относится к числу активных хирургов.

Командир ОРМУ-80 майор м/с Метренко.

Печать. Подпись.»

1946 çулхи ака уйăхĕнче П.Е.Ермолаев киле таврăнать. Часах хăй пилĕк çул каялла пулнă ĕçех вырнаçать. Пĕр уйăхран ăна сывлăх сыхлавĕн министрĕ А.И.Лихачев чĕнсе илет те республикăра онкологи службине йĕркелесе яма тата ертсе пыма сĕнет. Петр Ермолаевич çĕнĕ ĕçе пысăк хастарлăхпа кÿлĕнет. Çав çулах Улатăр, Çĕрпÿ, Канаш тата Етĕрне пульницисем çумĕнче онкологи пÿлĕмĕсем, республика пульницин никĕсĕ çинче онкологи диспансерне уçать. Вăл кунсерен кăткăсран та кăткăсрах операцисем тăвать. 1947 çулта Петр Ермолаевич çĕршыври вунă хирург шутĕнче йĕпе пырăн аялти пайне касса илме хăнăхать.

«Тин çеç йĕркеленĕ диспансерта пархатарлă ĕç пуçланчĕ, – çырнă П.Е.Ермолаев. – Анчах вырăнти влаçсенчен те, сывлăх сыхлавĕн министерствинчен те ни начар сăмах, ни ырă сăмах илтсе пулмарĕ. Общественность пире саламларĕ, малашнехи ĕçре ăнăçусем сунчĕ. Сывлăх сыхлав министрĕсен Мускаври канашлăвĕнче Совет Союзĕн тĕп онкологĕ Савицкий Александр Иванович профессор та Шупашкарти онкологи диспансерĕн ĕçне ырă тĕслĕх вырăнне илсе кăтартрĕ.

Диспансерта ĕçлеме çав-çавах питĕ йывăр, операци пÿлĕмĕ те çук, чирлĕ çынсене хирурги уйрăмĕнчи тĕрлĕ палатăна вырнаçтарса тухнă. 1950 çулта кăна онкологи диспансерĕ валли хирурги уйрăмĕн сулахай енне тата операци тумалли 8 тăваткăл метрлă пÿлĕм уйăрса пачĕç.

Диспансер валли уйăрса панă икĕ хутлă кирпĕч çурта парти архивĕнчен тата пурăнакан çынсенчен пушатса çитерме мĕн чухлĕ вăхăт кирлĕ пулчĕ. Ăçта кăна мĕн чухлĕ хут çырман-ши? Хула ĕçтăвкомĕн малтанхи председателĕ пире пĕтĕм ĕçре чăрмантарса, ура лартса пычĕ. Çĕнĕ председатель А.Б.Русин чухне çеç лав вырăнтан тапранчĕ. Çуртра пурăнакан çынсене урăх хваттерсене куçартăмăр та диспансерта койкăсен шутне çитмĕле çитертĕмĕр. Çакă чирлĕ çынсен ыйтăвĕсене тивĕçтерейместь.

1966 çулта кăна койкăсен шутне тата ӳстермешкĕн хушма çурт лартма никĕс яма май килчĕ».

1955 çулта Петр Ермолаевич пĕрремĕш хут чĕрене операци тăвать, тепĕр икĕ çултан сывă мар çыннăн ракпа сиенленнĕ хăрах ӳпкине ăнăçлă касса кăларать. Малашнехи çулсенче те вăл онкологи ĕçне малалла аталантарма хăйĕн пĕтĕм вăй-халне тата пĕлĕвне парса ĕçлет. Хăйĕн пысăк опычĕпе ăсталăхне кăтартса çамрăк хирургсем хатĕрлет. Ăслăлăх ĕçĕсем çырса пичетлет. 1961 çулта диспансер çумĕнче пайăрка терапийĕн уйрăмне йĕркелет. Ку – пĕтĕм республикăшăн пысăк çитĕнӳ пулнă. Çавăн пекех вăл онкологи ыйтăвĕсемпе çĕршыври тĕрлĕ хулара конгрессемпе конференцисен ĕçĕсене хутшăнать. Шупашкар Хула совечĕн депутачĕ пулать. Халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе паллă ĕçсем тунăшăн ăна Чăваш АССР тава тивĕçлĕ врачĕ ятне панă.

Шел, çакăн пек аслă чĕреллĕ çын, пиншер çынна вилĕмрен çăлса хăварнă хирург Петр Ермолаевич Ермолаев пенси çулне çитиччен те пурăнса çитеймест. Вăл 59 çулта, 1967 çулхи чӳк уйăхĕн 27-мĕшĕнче вилнĕ. Ĕненме те хĕн, Петр Ермолаевич хăй вилес куна та темиçе эрне маларах шутласа пĕлнĕ. Вăл Шупашкарти электроаппаратура завочĕн тĕп инженерĕ Вениамин Иосифович Златопольский патне хăйĕнпе арăмĕн вил тăприйĕсем çинчи пулас палăксем валли никельпе хром витнĕ плиткăсем тума чертежсем ярса парать. «Ан тĕлĕнĕр, юлташăм, – çырнă вăл. – Ку – саккун йĕркипех. Çут çанталăк саккунĕ çапла: «Çын çуралать – вилĕм çуралать». Шанатăп, вăрттăнлăх иксĕмĕр хушăра юлать». Хăйĕн вилнĕ кунне вăл «19 27/XI 67» тесе палăртнă. Ку, чăн та, пророкла пĕлниех пулнă. Арăмĕн плитки çинче çав куна вăл палăртман. Унăн арăмĕ Мария Алексеевна ракпа чирлесе упăшки хыççăн лăп та шăп тепĕр виçĕ уйăхран вилнĕ...

Хĕрĕх çул ытла ĕнтĕ Петр Ермолаевич пирĕнтен уйрăлни, анчах унăн çутă сăнарĕпе ырă ячĕ халăх асĕнче пурăнать. Çирĕм пĕр çул Чăваш Енĕн штатра тăман тĕп онкологĕ пулчĕ. Тăван республикăра вăл туса йĕркеленĕ тата ертсе пынă онкологи служби шанчăклă ĕçлет. Унăн вĕренекенĕсем те йышлă пулнă. Кусем – В.Г.Гаврилов, Г.М.Михайлов, В.А.Хирбю, Л.М.Танеева, А.Ф.Салмин, В.И.Лисов, В.И.Кузьмин, В.Ф.Григорьев, А.Ф.Григорьев, Ю.М.Павлов, В.Н.Макеев, И.Ю.Долгов, А.Л.Раськин, Н.И.Токарев, В.Ф.Ракеев тата ыт.те. Вĕсен ячĕсене те пĕтĕм республика пĕлет.

1970 çултан пуçласа республикăри онкологи диспансерĕ малалла аталанчĕ. 1973 çулта радиологи корпусĕ ĕçе кĕчĕ, 1974 çулта вара 220 вырăнлă сиплев корпусĕ хута кайрĕ. 1983 çулта тĕп лабораторипе цитологи лабораторийĕ, химитерапи уйрăмĕ уçăлчĕç, 1984 çулта поликлиника çумĕнче пульмонологи тата маммологи пӳлĕмĕсем сывă мар çынсене йышăнма пуçларĕç. 1992 çулта 100 вырăнлă çĕнĕ сиплев корпусĕ çĕкленсе ларчĕ...

Халĕ республикăри онкологи диспансерне пултаруллă та ырми-канми ĕçчен хирург, медицина ăслăлăхĕсен докторĕ Игорь Юрьевич Долгов профессор ертсе пырать. Пилĕк çул каялла вăл унти И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн онкологи кафедрине йĕркелесе уçнă. Хастар та туслă йыш хăйĕн тивĕçĕсене чыслăн пурнăçласа пырать...

**Николай ГРИГОРЬЕВ,**
**Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ врачĕ,**
**Н.Я.Бичурин ячĕллĕ преми лауреачĕ**